Чи кирли çинчен калаçатпăр

истори ас тăвăмĕпе ăрусен çыхăнăвĕ

Раççей халăхĕсен пĕрлĕхĕ

# ПЕСНИ О ВОЙНЕ

## КО ДНЮ ПОБЕДЫ



# ВĂРÇĂ ÇИНЧЕН ХЫВНĂ ЮРĂСЕМ

## ÇĔНТЕРӲ КУНĔ ТĔЛНЕ

# 1-мĕшпе 2-мĕш классен «ЧИ КИРЛИ ÇИНЧЕН КАЛАÇАТПĂР» занятийĕн СЦЕНАРИЙĔ

## 31-мĕш заняти Вăрçă çинчен хывнă юрăсем. Çĕнтерӳ кунĕ тĕлне

**Занятин кунĕ:** 2026 çулхи çу уйăхĕн 4-мĕшĕ.

**Занятин тĕллевĕсем:** шкулта вĕренекен ачасене Раççейĕн истори эткерĕпе тата Тăван çĕр-шыв историйĕпе кăсăклантарасси; фашизмпа нацизма çĕнтернин пĕтĕм тĕнчепе истори умĕнче тунă пĕлтерĕшне ăнланса илтересси, Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçи çинчен, пирĕн аслă ăрусен паттăрлăхĕпе хăйсене хăйсем шеллеменлĕхĕ çинчен пухнă ас тăвăма упранин пĕлтерĕшне çирĕплетесси; Тăван çĕр-шывмăрăн Аслă вăрçи вăхăтĕнче юрă çынсене епле витĕм кӳнине ăнлантарасси.

**Вăй илсе аталанакан пахалăхсем:** истори ас тăвăмĕпе ăрусен çыхăнăвĕ, Раççей халăхĕсен пĕрлĕхĕ.

**Тĕп шухăшсем**

- Çĕнтерӳ кунĕ вăл – историпе çыхăннă кун кăна мар. Çак кун вăл – ырăлăх, тĕрĕслĕх, Тăван çĕр-шыва юратни кирек епле йывăрлăха та çĕнтерме пултарнине ĕнентерекен чĕрĕ тĕслĕх те. Çĕнтерӳ кунĕ – пĕтĕм çĕре-шыва чи кирлине – тăнăçлăх хакне, пĕрлĕх пĕлтерĕшне, çыннăн чун хавалне пĕрлештерекен уяв та. Мăн асаттесен паттăрлăхне асра тытнă чух, вĕсен эткерне тивĕçлĕ упранă чух – Çĕнтерӳ пурăнать-ха.
- Юрă фронтри салтаксене тата тылри тĕрлĕ ĕçчене питĕ пысăк пулăшу паракан вăй пулса тăнă. Юрă халăха çирĕп тăма тата çĕнтерме хавхалантаракан вăй тата хаяр хĕç-пăшал пулнă, çавна май Совет халăхĕн шанăçне пĕтерме май паман. Вăрçă пуçламăшĕнче Совет композиторĕсем çĕр-çĕр çĕнĕ юрă хывнă, чылайăшĕ тӳрех «фронта тухса кайнă».
- Юрăсем аслă пулăмсенчен чылайăшне паянхи кунччен асра тытакансем пулса юлнă, çавна май çынсене фронтпа тылра мĕн пулса иртнине каласа панă, кашнин чунне ăшăтнă, паттăрлăх кăтартма чĕннĕ, салтаксем Тăван çĕр-шыва, савнă çыннисене кирек епле самантра та юратни çинчен каласа панă, çыннăн кăмăлĕ вăрçа пăхмасăр ялан ăшă та чĕрĕ иккенне ĕнентернĕ.
- Юрăсем итлекене халăх историйĕпе çыхăну пуррине туйма хистеççĕ, пулас ăрусене Тăван çĕр-шывăмăрăн Аслă вăрçи çинчен тивĕçлĕ ас тăвăм хăварма сăлтав параççĕ.

**Заняти тăршшĕ:** 30 минут.

**Занятие ирттерме сĕннĕ форма:** пĕлӳ паракан калаҫу. Занятире видео кăтартма, ушкăн ĕҫĕ пурнăҫлама, ĕҫ листинче кăтартнине тума палăртнă.

**Материал комплекчĕ:**

- сценари;
- меслет сĕнĕвĕсем;
- хушăм материалсем;
- видео материалĕсем;
- нумай енлĕ тумалли ĕҫ;
- презентаци.

**Хавхалантарупа тĕллев палăрту тапхăрĕ:** видео анонсне курни, калаҫу, ĕҫ листинчи задание туни.

**Тĕп тапхăр:** видео курни, калаҫу, ушкăн ĕҫне туни, ĕҫ листинче панă задание туни.

**Пĕтĕмлетӳ тапхăрĕ:** калаҫу.

## Мотивацине тĕллевлĕх тапхăрĕ

**Учитель:** Ман шухăшпа, сиртен нумайăшĕ юрлама е илемлĕ юрланине итлеме кăмăллать. Атьăр шухăшласа пăхар: ҫын тĕпрен илсен мĕнле лару-тăрура юрлать? Хаваслă чухне-и, тунсăхлă чухне-и?

*Ачасен хуравĕсем.*

**Учитель:** Ҫынсем, ытларах, кăмăл лайăх чух, телейлĕ чух юрлаҫҫĕ. Эсир епле шухăшлатăр: юрăсем епле ҫуралаҫҫĕ? *(Занятин презентацийĕ, 2-мĕш слайд.)*

*Сӳтсе явмалли ытусем:*

– Сирĕн шухăшăрпа, малтан мĕн ҫуралать: юррăн кĕвви-ши, сăмахĕсем-ши? *(Кашни юрă хăйне майлă пулать: хăш чух маларах кĕвĕ чĕрĕлет, хăш чух малтан сăмахсен пирвайхи йĕркисем кăна тухаҫҫĕ, е поэт пуҫĕнче пĕтĕм текст йĕркеленсе шăрҫаланать.)*

– Автора юрă хывма мĕн хавхалантарма пултарать? *(Учитель ачасене юрăсем ҫынпа савăнăҫра та, хуйхă-суйхăра та яланах пĕрле пулнă текен шухăш патне илсе пырать.)*

*Ачасен хуравĕсем.*

**Учитель:** Туслăха, юратăва, Тăван ҫĕр-шыв пысăкăшĕпе илемне халаллан ă юрăсенчен, уйрăм вырăн, Тăван ҫĕр-шывăн Аслă вăрҫи вăхăтĕнче тата вăл чарăннă хыҫҫăн хывнисем йышăнаҫҫĕ. Шăп та лăп ҫав юрăсем ҫинчен калаҫу пулĕ пирĕн паян. Ку юрăсем «Ҫĕнтерӳ кунĕнче» таҫта та: концертсенче те, телевиденипе радиора та – янăраҫҫĕ-ҫке.

*Учитель ачасене* ***1-мӗш ӗҫе*** *тутарать.*

*Учитель* ***София Петровӑна ӳкернӗ ролик анонсне*** *кӑтартать.*

## Тӗп тапхӑр

**Учитель:** Вӑрҫа халалланӑ юрӑсенчен нумайӑшне Тӑван ҫӗр-шывӑн Аслӑ вӑрҫин малтанхи кунӗсенчех хайланӑ. Кӗске вӑхӑтра хайланӑ «Священная война» «Сӑваплӑ вӑрҫӑ») юрӑ чӑн-чӑн гимн пулса тӑнӑ. *(Занятин презентацийӗ, 3-мӗш слайд.)* Юррӑн тексчӗпе нотисене пичетлеме вӑхӑт пулман та, Александр Васильевич Александров композитор юрра хӑма (доска) ҫине пурӑпа (мелпа) ҫырса хунӑ. Хорпа музыкантсем композитор ҫырнине хӑйсен тетрачӗсем ҫине куҫарса ҫырса илнӗ. 1941 ҫулхи ҫӗртме уйӑхӗн 26-мӗшӗнче юрра фронта каякан салтаксене ӑсатнӑ май умлӑ-хыҫлӑ харӑс 5 хут юрланӑ. Кун хыҫҫӑн пирӗн салтаксене малалла ҫапӑҫма вӑй парса юрӑ юпа (октябрь) уйӑхӗнчен тытӑнса кашни ир радиопа илтӗннӗ.

*Учитель* ***«Священная война»[1] юррӑн уйрӑм сыпакӗсене*** *итлеттерет.*

*Сӳтсе явмалли ыйтусем:*

– Сирӗн шухӑшӑрпа, юрӑ тӑшманпа ҫапӑҫма пӗтӗм Ҫӗр-шыва чӑннипе ҫӗклеме пултарни мӗнпе ҫыхӑннӑ?

– Кӗвӗ пирте епле туйӑм вӑратать?

– Эсир «ярость благородная» («пархатарлӑ хаярлӑх») сӑмахсене епле ӑнланатӑр?

*Ачасен хуравӗсем.*

**Учитель:** Марш майлӑ илтӗнекен юрӑсемсӗр пуҫне вальс ритмне пӑхӑнакан илемлӗ юрӑсем те хывнӑ. Марш евӗрлӗ юрӑсем Тӑван ҫӗр-шывшӑн хастар ҫапӑҫма чӗннӗ пулсан – илемлӗ те ачаш туйӑмлӑ юрӑсем мӗн тунӑ-ши? Вӗсене мӗнпе танлаштарма пулать?

*Ачасен хуравӗсем.*

**Учитель:** Вӗсем салтаксене тӑванӗсем, юратакан ҫыннисем ҫинчен каланӑ, каччӑсемпе хӗрсем ташӑсене ҫӳренӗ, паллашнӑ, пуласлӑх пирки, ҫемье ҫавӑрас пирки ӗмӗтленнӗ тӑнӑҫ вӑхӑтсене аса илтернӗ. Мӗн палӑртнине шелсӗр аллипе вӑрҫӑ сирсе ывӑтнӑ: вӑрҫӑ хирӗнчен пурте таврӑнайман, хӑйӗн юратнӑ ҫыннисене пурте кӗтсе илеймен. Кун пирки шухӑшласан чуна хуйхӑ ҫавӑрса илет, кулянтарать.

[1] Меслет ӑнлантарӑвӗ: учителе, заняти вӑхӑтӗнче, ӑна музыкӑллӑ тума тата темӑна тарӑн ӑнланса илме пулӑшма, ачасене, сценарире асӑннӑ вӑрҫӑ юррисен сыпакӗсене итлеттерме сӗнетпӗр. Хӑш юрӑсене итлеттересси, сыпӑксене мӗн варӑмӑш илесси педагогран килет.

Çапăçусем хушшинче ывăннă салтаксен чĕрисене, тĕслĕхрен, «Синий платочек» («Кăвак тутăр») евĕр юрăсем ăшăтнă. *(Занятин презентацийĕ, 4-мĕш слайд.)*

*Учитель* ***«Синий платочек» («Кăвак тутăр)» юррăн сыпăкне*** *итлеттерет.*

**Учитель:** Ку юрра вăрçăччене хывнă пулнă. Юрлакансемпе итлекенсем пурте юратнă. Çавăнпа юрласса тĕрлĕ вариантпа юрланă. Вăрçă пуçлансан юрă йĕркисем çумне çĕннисене хушнă та, юрату юрри Тăван çĕр-шывăн символĕ пулса тăнă: «Строчит пулеметчик за синий платочек, что был на плечах дорогих» («Пулеметчик манăçми хул пуççи çинче выртнă тутăршăн шатăртаттарать»). Эсир мĕнле шухăшлатăр: юрăра пулеметчик юратнă хĕрĕн хул пуççи çинче выртнă тутăршăн çапăçать тесе мĕншĕн каланă? Мĕн пур çыншăн, хăйĕн Тăван çĕр-шывĕшĕн çапăçать тесе мĕншĕн каламан?

*Ачасен хуравĕсем.*

**Учитель:** Кашни çыншăн Тăван çĕр-шыв вăл – пурăнакан вырăн, юратакан тĕнче, кашнишĕн паттăрлăх кăтартма хатĕр тăванĕсем. Салтаксемшĕн – вĕсене кам кĕтни, юратнă çынсем ăшă аса илӳсене упрани, Çĕнтерĕве тата часах çитмелли тĕл пулăва шанни пĕлтерĕшлĕ. Арсем хăйĕн Тăван çĕр-шывĕшĕн тата çемйишĕн çапăçнă, арăмĕсем вара упăшкисем Çĕнтерӳпе чĕрĕ те сывă таврăнасса шанăçлă кĕтнĕ, Тăван çĕр-шыв паттăрĕсен ачисене пăхса çитĕнтернĕ.

Фронтра нумай хĕрпе арăм та вăй хунă. Вĕсенчен пĕри, тĕслĕхрен, Нина Петровна Демешева пулнă. Вăл вăрçăн малтанхи кунĕсенчех медсестрасен курсне вĕренме кĕнĕ те 3 уйăхран çар санитари поездĕнче ĕçлеме тытăннă. Унтан медицина санитари батальонĕн тытăмĕнче Сталинграда хăтарнă çĕре тата Курск çапăçăвне хутшăннă. Вăрçă вĕçĕнче Нина Петровна Демешевăна Гварди 3-мĕш танк çарĕн юрăпа ташă ансамбльне илеççĕ те, хĕр Берлина илнĕ хыççăн Рейхстаг умĕнче иртекен концерта хутшăнать. Çĕнтерӳ кунне вара ирĕке кăларнă Прагăра кĕтсе илет. 2026 çулхи кăрлач уйăхĕнче Нина Петровна хăй 103 çул тултарнине паллă тунă.

*Учитель* ***Тăван çĕр-шывăн Аслă аслă варçине хутшăннă Нина Демешевăран илнĕ итервйăва видеопа*** *кăтартать.*

*Учитель* ***«Темная ночь» («Тĕттĕм каç») юрра*** *итлеттерет.*

**Учитель** *(занятин презентацийĕ, 5-мĕш слайд):* Чи илемлĕ кĕвĕллĕ юрăсенчен пĕри 1943 çулта «Два бойца» фильм валли çырнă «Темная ночь» юрă пулса тăрать. Юррăн лирика геройĕ арăмĕпе уншăн тата ачишĕн тунсăхласа

калаçать. Ку вăл – чуна вырăнтан тапратакан çутă юрă. Вăл юрату вăйĕ çинчен каласа парать. Сирĕн шухăшăрпа, юрă геройĕ: «Ты меня ждешь и у детской кроватки не спишь, и поэтому знаю: со мной ничего не случится!» – тесе мĕншĕн калать? Нихçан курман йывăр лару-тăрăва чăтса ирттерсе усала çĕнтерме пĕр-пĕринпе чунпа çывăх çынсене мĕн пулăшать?

*Ачасен хуравĕсем.*

**Учитель:** Фронтра çынсем тăшманпа çапăçнисĕр пуçне чăн-чăн туслашма тата пĕр-пĕрне пулăшма пултарнă. Пурне те асаплантаракан хуйха ирттерсе яма тата тăшман тапăнăвне чăтма нумай нациллĕ çĕр-шывăн гражданĕсен пĕрлешме тивнĕ. Кăткăс лару-тăрура çуралнă, çарта пулнă çулсенче пулнă туслăх кайран та чылай вăхăта – çын виличченех пынă. *(Занятин презентацийĕ, 6-мĕш слайд.)*

*Учитель ачасене* ***«Где же вы теперь, друзья-однополчане?» («Халь ăçта эсир, полкра тупнă туссем?») юррăн сыпăкне*** *итлеттерет.*

**Учитель:** Ушкăнпа тăвакан ĕç тата фронтра çирĕпленнĕ йăла-йĕрке тĕрлĕ професси çыннисене пĕрлештернĕ. Ĕç листинче панă задание тăвар та эсир çар профессийĕсенчен хăшĕсене пĕлнине палăртар. *(Занятин презентацийĕ, 7-мĕш слайд.)*

*Учитель* ***ĕç листинче панă 2-мĕш задание*** *тутарать.*

**Учитель:** Паллах, юрăсенче çар специальноçĕсене те асăнаççĕ. Ку юрăсенчен пĕрисем мажорлă та хаваслă, теприсем çутă тунсăхпа тулнă та минорлă илтĕнеççĕ.

*Учитель* ***ушкăнпа тума «Çар çыннисене халалланă юрăсем» ĕç*** *парать.*

*Сӳтсе явмалли ыйтусем:*

– Сире ытларах хăш юрă килĕшрĕ? Мĕншĕн килĕшнине ăнлантарăр.

– Çынсене хаваслă, хăш чух шӳтлĕ тата тарăн шухăша яракан, тунсăхлаттаракан юрăсем мĕншĕн кирлĕ пулнă?

– Эпир вăрçă вăхăтĕнче юрăра çын пурнăçĕн тĕрлĕ енĕпе пулăмĕ палăрнă теме, юрăсем пирĕн халăхăн музыка историйĕ пулса тăнă теме мĕншĕн пултаратпăр?

– Вăрçă юррисем пире мĕн çинчен каласа пама пултараççĕ?

*Ачасен хуравĕсем.*

Учитель **«Вăрçă çинчен хывнă юрăсем» 2D ролик** кăтартать.

**Учитель:** Маршра утсан та, юлташсемпе кăмака умĕнче ларсан та, хĕç-пăшала тасатсан та юрă юрлама май пур. Çапах та алăра кăмăла çывăх музыка инструменчĕ пулсан тата лайăхрах. *(Занятин презентацийĕ, 8-мĕш слайд.)* Атьăр шухăшласа пăхар: салтак вăрçа музыка инструменчĕсенчен хăшне-хăшне илме пултарнă?

*Учитель* ***ĕç листинче кăтартнă 3-мĕш задание*** *тутарать.*

**Учитель:** Анлă сарăлнă инструмент купăс пулнă. Хĕлĕхлĕ инструментсенчен гитарăна, тăмра-балалайкăна тата, тĕлĕнмелле те, сĕрме купăса (скрипкăна) асăнмалла. Вĕсем фронтра салтаксемпе пĕрле çӳренĕ. Пирĕн çĕр-шывра нумай тĕрлĕ халăх пурăннăран хăш-пĕр салтаксем хăйсен наци инструменчĕсене илнĕ. Вĕсем салтака тăван килпе çуралнă вырăн, тăван кĕтес ăшшине, кĕввисене аса илтернĕ. Сирĕн шухăшăрпа, полкра харăс темиçе мусăкçă пулнă пулсан вĕсем епле майпа пĕрлешĕччĕç?

*Ачасен хуравĕсем.*

**Учитель:** Хăш-пĕр полкра хăйсен ансамблĕсем, хорĕсем пулнă. *(Занятин презентацийĕ, 9-мĕш слайд.)* Кĕвĕ-юрă пачах тĕрлĕ çынсене пĕрлештернĕ, вĕсене вăй панă, хавхалантарнă. Ку вара пурне те вăрçăченхи пурнăçа аса илтернĕ, тăнăç пурнăç каллех таврăнасса шантарнă.

Сиртен кам та пулин вăрçă фильмĕсене курнă та пуль. Вĕсенчен «В бой идут одни старики» ятлинче çар летчикĕсен «Смугланка» юрра юрлакан ансабльне палăртмалла.

*Учитель* ***«Смуглянка» юррăн сыпăкне*** *итлеттерет.*

**Учитель:** «В бой идут одни “старики”» фильма 1973 çулта ӳкернĕ, çапах фильмра фронтра чăн пулнине кăтартнă. Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçи вăхăтĕнче «Юралкан эскадрилья» чăннипех пулнă. Вăл Истребитель авиацийĕн гварди 5-мĕш полкĕн тытăмĕнче тăнă. Эскадрилйăн хăйĕн хорĕ пулнă. Икĕ самолетне Леонид Утесов оркестрĕ парнеленĕ. Вĕсенчен пĕрин çине «Веселые ребята» («Хаваслă ачасем») тесе çырни илемлĕн курăнса тăнă. (Çак ятпа экрансем çине 1934 çулта тĕп роле Леонид Утесов вылянă фильм тухнă иккен.)

*Сӳтсе явмалли ыйтусем:*

– Салтаксене патшалăхпа тăванĕсемсĕр пуçне пултарулăх ĕçченĕсем те пулăшни мĕнпе çыхăннă?

– Артистсем çар çыннисем валли мĕн тума пултарнă?

*Ачасен хуравĕсем.*

**Учитель:** Салтаксем патне малти линие час-часах фронтăн музыка бригадисем киле-киле кайнă. *(Занятин презентацийĕ, 10-мĕш слайд.)* Ун чухне салтаксен ансамбльсемпе профессионал юрăçăсене тата артистсене курма-илтме май пулнă. Мĕнле шухăшлатăр: театрта ĕçлеме май пур çинчех артистсем фронта мĕншĕн пынă?

*Ачасен хуравĕсем.*

**Учитель:** Кунашкал гастрольсем яланах хăрушлăхпа тата хастарлăхпа çыхăннă пулнă. Çавнашкал историсенчен пĕри Лидия Андреевна Русланова юрăçăпа пулса иртнĕ. Вăл пĕррехинче вăрçă вĕçленес умĕн Берлина пынă. Нимĕçсем кĕтмен çĕртен пеме пуçланă. Вара салтаксем: «Пĕшкĕнĕр!» – тесе кăшкăрса янă. Русланова: «Вырăс Юрри тăшмана пуç тайни хăçан пулнă вара?!» – тесе хуравланă. *(Занятин презентацийĕ, 11-мĕш слайд.)* Русланова сăмахĕсене эсир мĕнле ăнланатăр? Ку сăмахсем Лидия Русланова юрăçăн чун хавалĕ мĕнле иккенне мĕншĕн кăтартма пултараççĕ?

*Ачасен хуравĕсем.*

**Учитель:** Лидия Русланова салтаксем умĕнче юрланă хыççăн пĕррехинче çар çыннисенчен пĕри ак мĕн каланă: «Эпир çапаçу хыççăн епле таса маррине куратăн пуль. Апла пулин те эсĕ хăвăн юррусемпе амăшĕ ачисене çунă пек çуса тасатрăн. Пысăк тав. Шăннă чĕре ăшăнчĕ…» Мĕнле шухăшлатăр: ку сăмахсене салтак мĕншĕн каланă? Салтак юрăçа ача амăшĕпе танлаштарни мĕнпе çыхăннă? Юрă-кĕвĕ, илемлĕ юрлани çынна мĕнле тасатаççĕ, ун чĕрине мĕнле ăшăтаççĕ?

*Ачасен хуравĕсем.*

### Пĕтĕмлетӳ тапхăрĕ

**Учитель:** Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçи пирĕн çĕр-шывăн историйĕпе культуринче уйрăм вырăн йышăнать. Вăрçă вăхăчĕн юррисем хавхалану çăл куçĕсĕр пуçне тата культура эткерĕ те пулса тăнă. Çар маршĕсем те, вальссем те, хурлăхлă тата хаваслă юрăсем те – пурте хальхи çур кунĕсенче Пурнăçăн гимнĕ пек янăраççĕ.

Çар юррисене чун патне çитерекенсем нумай: хорсем те, çар оркестрĕсем те, илемлĕ фильмсем те т. ыт. те. Кашни юрăçă тата артист юрра мĕнле те пулин çĕнĕлĕх кӳрет, шухăш еккине улăштарать. Тахçан ĕлĕк хывнă пулин те юрăсем паян кунччен пурăнаççĕ. Вĕсене итлекен çынсем ку е вăл самантра кăмăлĕ, тавра курăмĕ епле пулнине кура хăйсем майлă тата çĕнĕлле ăнланма, юрăра асăннă пулăмсене хăйсене майлă туйма пултараççĕ.

*Сӳтсе явмалли ыйтусем:*

– Эсир епле шухăшлатăр: вăрҫă юррисем ҫынсен шухăшĕпе кăмăлне паян кун та тапратма пултарни мĕнтен килет?

– Сирĕн хăш юрăсене тепĕр хут итлес е пăхмасăр калама вĕренес килет?

– Тăван ҫĕр-шывăн Аслă вăрҫи вăхăтĕнче хывнă юрăсене итленĕ чух эсир мĕн туятăр?

– Вăрҫă юррисем ҫинчен ас тăвăм епле упрамалла? Ҫынсем ан манччăр тесен мĕн тумалла?

*Ачасен хуравĕсем.*

**Учитель:** Юрă-кĕвĕ ҫинчен нумай тата хавхаланса чылай калаҫма пулать, ҫапах хăй ҫинчен, нимрен лайăх, музыка кăна каласа параять. Атьăр Александра Николаевна Пахмутова ҫырнă юрра итлер те ĕҫ листинче панă задание тăвар.

*Учитель **«Поклонимся великим тем годам» юррăн сыпăкне** итлеттерет.*

*Учитель **ĕҫ листинче панă 4-мĕш задание** тутарать.*

**Учитель:** «Ҫĕнтерӳ кунĕ» уяв нихҫан та Давид Тухмановăн «День Победы» («Ҫĕнтерӳ кунĕ») юррисĕр иртмест. *(Занятин презентцийĕ, 12-мĕш слайд.)* Пурсăмăра та Тăван ҫĕр-шывăн Аслă вăрҫинче Ҫĕнтерӳ патне ҫитернĕ мĕн пур салтака ăшра тав тума хавхалантаракан тата мăнаҫлăх паракан юрра итлеме сĕнетĕп.

*Учитель **«День Победы» юррăн сыпăкне итлеттерет.***

## Юлашки калаҫу

**Мĕн вуламалла?**

- Воронкова Л. «Девочка из города»
- Яковлев Ю. «Девочки с Васильевского острова»
- Иванова Ю. «Дорога жизни»
- Паустовский К. «Похождения жука-носорога»

**Мĕн курмалла?**

- Киноурок «Думать тишину»
- Мультипликационный фильм «Солдатская лампа», 1984
- Мультипликационный фильм «Василек», 1973
- Мультипликационный фильм «Легенда о старом маяке», 1976
- Короткометражный фильм «Возвращение домой», 2015